# Çĕрте те çĕрместпĕр![1]*

Хусанкай - Совет саманинче вăй илсе çунат сарнă чăваш халăхĕн ятлă юрăçи. Тăван литературăра Петĕр Хусанкай чи малти ретре тăратъ. Лирикăллă пĕчĕк сăввисенче те, гражданла çĕкленӳпе çырнă поэмисенче те, чĕре хĕлхемĕ тивертнĕ статйисенче те эпир, вулакансем, унăн пĕр хăйне кăна тивĕçлĕ сассине палласа илетпĕр - Хусанкайла чăн-чăн пысăк Поэт çырнине асăрхатпăр. Хăйĕн произведенийĕсенче вăл «кĕнекелле» ӳкерчĕксемпе муталантармасть, калас тенĕ шухăша тăван халăх шухăшĕпе ăста çыхăнтарса калать, кăткăс инверсисем туса пуçа минретмест, мĕншĕн тесен тăван чĕлхемĕр ун пек юптаруллă çаврăнăçсене ытлах килĕштерсе каймасть, шухă-ша тӳррĕнех витĕмлĕ калама хистет. Символсем, метафорăсем, танлаштарусем - поэзире мĕнле кăна хăват кирлĕ - пурте унăн, вĕсене пĕрне те тăван халăх ăс-хакăлĕнчен уйăраймастăн. Поэт эппин, лартам та пĕр çаврăм сăвă çырам-ха, тесе тĕлленмест, чун хавалĕ хушнипе хăи калас тенĕ ĕмĕтне, ыттисене те пĕлтересшĕн пулса чунĕ чăтайманиипе çырать. Çавăнпа Петĕр Хусанкай хăватлă пысăк ăста, чăн-чăн халăх поэчĕ. Вырăсла вулăпăр-и ун сăввисене, тутарла-и, пăлхарла-и - кирек ăçта та ăна хамăрăн чăваш поэчĕ çырнине туятпăр.

Нумай-нумай чĕлхесене куçарнă Петĕр Хусанкайăн произведенийĕсене. Вĕсене миллионшар халăх вулать, миллионшар халăх вуласа чăваш халăхĕпе, унăн шухăш-кăмăлĕпе паллашать. Кулленхи ĕçĕнче Хусанкая тăван халăх пултарулăхĕ, ăс-хакăлĕ хăват парса тăнă, чун хавалне çĕклентернĕ. Ку вара этемлĕх цивилизаци мулне пирĕн халăх та, мĕн пултарнă таран, «кĕреçе пайе» хывнине пĕлтерет.

---

[1] Ку статьяна Илпек Микулайĕпе перле çырнă

Сăмах хальхинче «Çĕрте те çĕрместпĕр» поэма пирки пырать («Ялав» журнал, 6-7-мĕш номерсем, 1968 ç.). Хусанкай çак поэмăна граждан вăрçинче вăхăтсăр пуç хунă паттăр хĕрлĕ салтак «Иван ывăлĕ Прахур» çинчен çырнă. Прохор Иванов шухăшласа кăларнă паттăр мар, вăл хальхи Элĕк районне кĕрекен Иăлкăш ялĕнчи хресчен ачи пулнă. Мĕн пĕчĕкрен килти ĕçе вĕреннĕ: хир ĕçне çӳренĕ, выльăх пăхнă, çитĕнсе çитнĕ чух вăрçă хускалнă та вăл хĕрлĕ салтак пулса тăнă.

Ку поэма пĕрре ларса çырнă произведени мар. Ăна çырас тесе, Петĕр Хусанкай таçта та çитсе курнă: вăл герой çуралнă ялта та, ĕлĕкхи **«Э**рмен Пасарĕ», халь «Армянск» текен Крымри хулара та, Сиваш шывĕ хĕрринче те пулнă. Нумай ширанă, нумай тупнă, шухăшланă. Акă мĕн калать вăл çавăн пирки:

Ун чулне çитсе эп куртăм:
Пĕр сăмахсăр пуç тайса,
Чечек пуç кăшăлĕ хутăм,
Тăтăм шухăша кайса, -

тет поэт.

Тĕрлĕ халăх ячĕ илтĕнет поэмăра. Кунта эпир Прохорпа пĕрле пыракан Аристарх Антоновпа, Шăнкăртам тутарĕ Ахметпа, Миклай мариецпа, Файзутдинов Гилемзят тутарпа, Владимир Юрин вырăспа тата ыттисемпе те паллашатпăр. Пусмăрçăсене хирĕç пур халăх та çĕкленнĕ. Ирĕклĕхшĕн, Совет çĕршывĕшĕн, телейлĕ пурнăçшăн! Çакăн пек тăшманпа çапăçнă вăхăтра сăваплă йыхрав ертсе пынă пирĕн Хĕрлĕ Çара.

Кăшт кăна аса илер-ха, сăмах май, ĕлĕкхи саманана. Патша чухне мĕнле кăна мăшкăл тӳссе курман-ши пирĕн халăх: трахом çĕршывĕ, Ваçли Иванч, пушăт та мунчала, çăпата патшалăхĕ... Чăтса чăтăм çитмен хушăра, Разинпа Пугачев вăхăтенчех-ха, чăваш та, пусмăрти ытти халăхсемпе пĕр рете тăрса, алла кистен тытса, патша тытăмне

хирĕç хăюллăн çапăçма тухнă. Вырăссен пĕрремĕш революци çулĕсенче пирĕн çынсем, пусмăр саманине кураймасăр таврари мул хуçисемпе пусмăрçăсене хирĕç паттăррăн кĕрешнĕ. Ленин партийĕ ертсе пынипе Октябрь революцине чĕре хушнипе хутшăнса ирĕклĕхшен кĕрешнĕ чух пирĕн салтаксем те тивĕçлĕ вырăн йышăннă. Совет влаçĕшĕн кĕрешнĕ çулсенче мĕнле кăна паттăрсем пулман-тăр пирĕн çĕршывра! Чапаевпа Павлов, Космовскипе Крепков, ытти çĕршер те пиншер ят илем те чыс кӳрет ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ пирĕн халăха. Çак поэма геройĕ Прохор Иванов çавăн пек геройсенчен пĕри пулнă.

Патша самани вăрçă хыççăн вăрçă хускатнă. Ун чухне чăвашсене «вак халăх», «ют ăру» тесе тăман. Кил-йышра пĕр вăйпитти çын юлми вăрçа илсе кайнă та юн тăктарнă. Чи тискер вăрçăсенчен пĕри ĕлĕкхи тĕнче вăрçи пулнă. Чăваш ялĕнче ун чух ватти-вĕтти те хĕрарăмсемпе чăлахсем кăна тăрса юлнă. Ыттисене пĕтĕмпе фронта илсе кайнă. Юхăннă хуçалăх, чухăн пурнăç, выç-лăх та вилĕм - акă мĕн кӳнĕ пире çав тискер вăрçă. Аслă Ленин, пĕтĕм халăхăн нушаллă пурнăçне витĕр курса тăнă гений, çав хура та тискер пусмăр саманинчен мĕнле хăтăлмаллине пĕртен-пĕр тĕрĕс çул кăтартса пачĕ, ком-мунистсен партийĕ пĕтĕм халăха ертсе пырса çав ирĕклĕхе тухма кĕрешсе вăй хучĕ. Патша тĕп пулчĕ. Путланчĕ çĕрĕшнĕ йĕрке. Çĕнĕ самана, çĕнĕ йăла аталанать, çĕнĕ вăй илет халь таврара. Çуралнă çăршыв та халь ама-çури мар, вăл халь чăннипех тăван çĕршыв пулса тăнипе пĕтĕм ĕççынни ăнланса илет. Ăна ĕмĕрсен кĕрешĕвĕнче вăй та пурнăç хурса çапăçса илчĕ, халь ĕнтĕ çĕнетсе телейлĕ кунçул тума пĕлмелле. Акă мĕнле пысăк ĕç, пысăк ĕмет тытать пирĕн халăх.

Анчах патшаран юлнă йăх-яхсем парăнасшăн мар-ха. Хăйсем вилессе сиснĕ тăшмансем, юлашки хевтнне пуçтарса, ирĕке тухнă халăха каллех пахăнтарасшăн пулса, çĕршывра хаяр вăрçă хускатса яраççĕ. Хăйсем тĕллĕн кăна ĕçхалăхне çĕнтерме çуккине чухлаççĕ

вĕсем, çавна пула кӳршĕ патшалăхсенчен пулăшу йăланаççĕ. Пулăшу кăна-и? Совет самани пĕр хамăр çĕршывра кăна мар, тĕнче ĕçхалăхне çĕклентерсе, пĕтĕм пусмăрçăсене путар-ма пултарать. Çакна сисекен империалистсем кун ванмасăр та çĕр çывăрмасăр Совет çĕршывне интервенципе килсе кĕреççĕ. Антанта - «таса канаш» вĕсен юлашки шанчăкĕ. Америкăра, Францире, Апглире хывăнаççĕ пире хупăрласа аркатмалли тӳлемсем. Çавсем усранă кĕрт йыттисенчен пĕри Врангель барон пирĕн çĕршывăн кăнтăр чиккинче Крымра окопсем чавса кăшăлланă. Ана ют çĕршыв пуянĕсем пулăшаççĕ. Танксемпе самолетсем, тупăсемпе етресем илсе çитернĕ вĕсем Совет Çарне хирĕç çапăçма.

Совет Çарĕнчи салтаксенчен пĕри - Прохор Иванов. Вăл тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн çапăçма тухнă хĕрлĕ салтак. Ăна, хăйĕн юлташĕсем пекех, ирĕклех кирлĕ, çĕр кирлĕ, чипер пурнăç кирлĕ, çавăншăн çапăçса, вăл Совет влаçĕ çĕнтерессе шанса пуçне хума та хатĕр. Шăпах çав салтак çинчен çырнă Хусанкай хăй поэминче.

«Çĕрте те çĕрместпĕр»тени вăл çунатлă сăмах пек илтĕнет пулсан та, кунта аллегориллĕ шухăш мар. Прохор Иванов граждан вăрçинче «ятсăр çухалнă» салтаксенчен пĕри пулнă, ун ӳтне 1935-мĕш çулта, хăй пуç хунă хыççăн 15 çул иртсен, Сиваш шывĕнче тупнă. Тăварлă шывра вăл хăй кăна мар, унăн докуменчĕсем те çĕрмесĕр сыхланса юлнă.

... 1920-мĕш çул. Революцин виççĕмĕш çулĕ. Каховка. Перекоп. «Крымри тăвансем асапра. Унта ашкăнать улпутсен шурă çарĕ, çапса ватмалла çав çара! Çапатпăр, вататпăр! Крыма хăтаратпăр!» - хĕрӳллĕн чĕнсе калать сăмахне комиссар!

Çак пысăк çапăçу умĕн пирĕн Прахвур, хуткупăс каласа хăйĕн юлташĕсен кăмăлне çĕклентерекенскер, комсомола çырăнать, юлташĕпе пĕрле шуррисем патне хăюллăн кайса «чĕлхе» тытса килет, çар штабĕ валли пысăк ĕç тăвать. Ăнланать вăл: «Халлĕхе - пăшал пемесĕр ирĕк те

лекмест пире...» Акă, «Шывлă-шурлă, тăварлă Сиваш... Çичĕ çухрăм сарлакăш çав кӳлĕ...» Кунта Ленин хушнипе Фрунзе килнĕ, хĕрлĕ салтаксене вăл Октябрь уявĕ ячĕпе салам калать. Фрунзе ертсе пынипе Хĕрлĕ Çар тăшмана тапăнать, ватать, ăна пĕтĕмпе ишсе çĕмĕрет. Винтовкине умне тытса, Прахвур та малалла ыткăнать. Анчах сасартăк «çак юлашки çапăçу!» тесе çĕкленнĕ чăваш ачи Сиваш урлă каçса çитес чух пуçне хурать. Паттăр çапăçса вилет вăл çакăнта, выртса юлать тăварпа варăнса. Юлташĕсем малалла каяççĕ.

Çак поэмăна çырнă чух Петĕр Хусаикай паянхи пусăмран вăй илет.

Эпир, «вăрçă-вăрçă!» тесе,
Мĕнпур ĕмĕрхи тискере
Тĕнче умĕнче питлесе,
Çĕнетрĕмĕр хамăр çĕре...
Çĕр пире астутарасшăн:
«Усрăр çамрăк ăрава,
Ан вăрçсамăрччĕ, тархасшăн,
Ан пĕтерĕр хăвăра...»

- тет вăл.

Ку философиллĕ тарăн шухăш. Çак шухăш хальхи саманан чи таса, чи сумлă ĕçĕпе ĕмĕтне пĕлтерет. Эпир вăрçасшăн мар. Пирен хуласемпе ялсенче çĕнĕрен çĕнĕ çуртсем лартмалла, промышленность предприятийĕсене ӳстермелле, ача-пăчасене пăхса вĕсем валли тата пысăкрах телейлĕ пурнăç тумалла, хурçă шăратмалла, искусствăпа культурăра ĕмĕр-ĕмĕр манăçми произведенисем кăлармалла. Анчах империалмстсем ав хăйсен пусмăрлас йăлине пăрахмаççĕ. Пăрахмаççĕ кăна та мар, вĕсем тĕнчен пĕр кĕтессинче е тепĕр кĕтессинче вăрçă-харçă вутне чĕртсех тăраççĕ.

Çапах та ирĕклĕх вăл - халăха пурăнма кирлĕ чăнлăх, вăл - сывлас сывлăш та кулленхи çăкăр-тăвар. Вăл пур çĕрте те вăй илсе çитерсе

çĕнтерессе пĕр иккĕленмесĕр шанса тăтăмăр. Социализм идейи - чи аслă идея. Ĕнер вăл пирĕн ĕмĕтленнĕ ĕмĕтчĕ, паян - хамăр куçпа куракан чăнлăх.

Çавăнпа та вăрçа хирĕç хамăрăн таса вăрçа кĕресси - пирĕн халăхшăн истори суннă парăм. Çавăн пек эпир фашистла Германие хирĕç çапăçса çĕнтертĕмĕр, çавăн пекех ытти агрессорсене те, енчен вĕсем пирĕн çĕршыва вут-çулăмпа тапăнас пулсан, пурсăмăр та, ретĕн-ретĕн тăрса, таса кĕрешĕве тухăпăр.

«Этем вăрçмасса вăй хурать,
Этемлĕхĕн - хăйĕн йĕрки:
Хăш вăрçă - тăвасшăн чура,
Хăш вăрçă - чăн ирĕк пирки», -

тет поэт, паçăр эпир асăннă шухăша çирĕплетсе.^

Поэт пире Прохорпа лайăх паллаштарать, унăн ял-йышне кăтартать. Мĕн тунасси пур: ун чухне пĕр Прахвурсен Йăлкăшĕ кăна мар, Çеçпĕлсен Касаккасси те, Ивановсен Слакпуçĕ те, Хусанкайсен Сиктĕрми те - пурте пĕр евĕрлĕ чăваш ялĕсем пулнă. Хурал пӳртне пуçтарăннă ялйыш «сарă хутлă» «Канаша» вуланă, Совет çĕршывĕн хыпарĕсене пĕлме тăрăшнă, шурă çарсем тапăнса килесрен пăшăрханнă. Халăх хăй ĕçне сыхлама кирлĕ иккенне чиперех ăнкарнă: тăван çĕршывшăн та ирĕклĕхшĕн, пулас телейшĕн кĕрешме чĕннĕ ун чух Ленин партийĕ. Куççуль тăкса та нăйкăшса мар, ăстăнпа ăнланса, хулпуççине хуткупăс çакса, таса вăрçа тухса кайнă Йăлкăш ялĕнчи чăваш ачи Прахвур Иванов та. Ăçта Совет влаçĕн тăшманĕ пур - çавăнта. Ун чухне çамрăк Совет çĕршывĕн хăрушă тăшманĕ Врангель çарĕ пулнă. Вран-гель, хăй тавра илешнĕ Раççейри мул хуçисемпе тĕрлĕ пуян-мещен тĕпренчĕкĕсене пуçтарса, ют çĕршыв капиталисчĕсем пулăшнипе вăйлă хĕçпăшалланнă та Совет çĕршывĕн Крым

çурутравĕнче хуçаланса тăнă. Çавăнтан вăл пирĕн ирĕклĕхе хупăрлама хĕрĕннĕ.

Прахвур хастарлă салтак пулать, вăл мĕншĕн кĕрешмеллиле пĕлет, çапăçура ырă ятне ямасть. «Чăваш ятне ан çĕрт» тени кирек ăçта та ун асĕнчен каймасть. Юлташĕсемпе тан пырса, вăл кулленхи çапăçура пулать.

Пире çак Прахвур вырăс ачипе - Владимир Юринпа туслашса кайни савăнтарать. Вĕсем иккĕшĕ те самана таппине тĕшмĕртекен пулнă ĕнтĕ, идея енчен пĕрле туптанаççĕ, хăшĕ юлташ та хăшĕ тăшман иккенне тĕрĕс ăн-ланакансем пулаççĕ. Чăваш облаçĕ пулни Прахвура савăнтарать, уншăн Юрин та хĕпĕртет. Ак мĕн калать вăл:

«Тĕрлĕ халăх пурăнать те
Пирĕн аслă Руç тулли,
Ленина халь курăнать-тĕр
Лайăхрах мĕн тумалли».

Ку ĕнтĕ политикăна салтак, майĕпен пулсан та, тĕрĕс ăнланнине пĕлтерет. Мĕн калаосси пур, нумай пулмасть ялтан тухнă хресчен ачине политика ыйтăвĕсем каярахпа кăна, шăпах хăйсене кирлĕ чух тенĕ пулăттăмăр, асне киле пуçланă çав. Çак историллĕ те социаллă тапхăра Хусанкай пит тĕрĕс палăртса хăварать. Кунта «кайрăмăр - çĕнтертĕмĕр!» тесе вĕçкĕнленсе каланă сасă çук, «пурăнăпăр-курăпăр» тенĕ май ăнланмалла, çавăн пек пулнă тĕттĕм ялсенче пурăнса курнă хресченĕн кăмăлĕ, çавăн пек вăй илсе аталаннă вĕсен социаллă йăли. Поэт ăна психологи кăшăлĕпе хытарса пит тĕплĕн вырнаçтарать.

«... Буржуйсем памастчĕç ĕмĕр
Автономи ннкама!» -

тет Владимир Юрин, Ленин пирки сăмах хускатсан.

Çак таса шухăш Прахвурăн кĕрешĕвĕнче чун ĕмĕтленнĕ йыхрав пулнă. Вăл çаплах пулнине шанатпăр эпир, Хусанкай пире унталла-

кунталла пăркалантармасть, калас тенĕ шухăшне пат татса тӳррĕн калать те, эпир ăна ĕненмесĕр пултараймастпăр.

Çак шухăш паянхи вăхăтпа та шăпах шайлашса тăрать. «Чăваш-и, вырăс-и, тутар-и - мĕн пурĕ пĕр çăлтăр айне!» - тенĕччĕ Хусанкай «Автономи маршĕ» сăввинче. Илтĕнмест-и-ха, эппин, чăваш халăх поэчĕн вăтăрмĕш çулсенчи сасси халь çырнă поэма сыпăкĕнче те! Пĕр çăлтăр айĕнче пулса, эпир социализмла самана турăмăр, пĕр Хĕрлĕ çăлтăр çутипех эпир коммунизмла саманана та кĕретпĕр.

Прахвур салтакăн кунçулĕ кĕске пулнă. Унăн паттăр пурнăçĕ вăхăтсăр таталнă. Реквием пек илтĕнеççĕ поэтăн уйрăм йĕркисем:

«Манăн пуçкăшăлăм шанĕ, -
Пит черченкĕ вăл çеçке.
Ытларах сăну сыхланĕ.
Ун та ĕмĕрĕ кĕске.
Чул çинчи çыру якалĕ
Палăк填 лармĕ ĕмĕрех, -

тет поэт.

Анчах ку вилле асăнса юрланă юрă мар! Поэмăн ячĕ те çавнах шантарса калать: «Çĕрте те çĕрместпĕр!» Çапла çав пирĕн халăх. Ахальтен мар чăваш ваттисен сăмахĕ: «Шывра та путмастпăр, вутра та çунмастпăр!» - тет. Халь çав сăмах çумне «Çĕрте те çĕрме,тпĕр!» тени те хутшăнчĕ. Истори палăкĕн чулĕ çĕрмест. Çав палăкăн хисеплĕ чулĕ вырăнне хывăнчĕ ĕнтĕ пирĕн янташ Прохор Иванов ячĕ те. Хусшкай çав строфарах вулакана ак мĕнле каласа шантарать:

«Пурăнать сăмах вăй-халĕ,
Пин çултан та вăл чĕрех».

Ку вара палăк кăна мар. Ку вăл халăх кунçулĕнче ĕмĕртен ĕмĕре халăхпа хăйпе пĕрле пыракан ялав, халăхăн чун хавалĕ, унăн пурнăçĕпе кăмăлĕ.

«Тертлĕ утăм - пин хăлаçлăх,
Шит те питĕ сарлака.
Тав пăшаллă та хутаçлă,
Кĕреçеллĕ салтака!» -

тетпĕр эпир те поэтпа пĕрлех.

Салтак вăл - хамăр çын, вăл совет салтакĕ, совет çĕршывĕн хуралçи, пулас коммунизм саманин чи шанчăклă та таса чысĕ. Çавăн пек пулнă та ĕнтĕ çĕрте те çĕрмесĕр юлнă Прохор Иванов, çавăн пекех пулнă унăн юлташĕсем те.

Хусанкайăн «Çĕрте те çĕрместпĕр» поэми - хальхи хамăр чăваш поэзийĕнчи паха произведенисенчен пĕри. Вăл пĕр поэт çĕнтерĕвĕ кăна мар, пĕтĕм чăваш поззийĕн çĕнтерĕвĕ. Вулакансем ăна сума суса йышăнчĕç.

Хамăр илтсе пĕлнĕ юрă пек хывăннă «Çĕрте те çĕрместпĕр» поэма. Вăл пирĕн кулленхи ĕçпе-шухăшпа çыхăнса тăрать. «Çĕрте те çĕрместпĕр» поэма - телей çĕршывĕшĕн çапăçса вăхăтсăр пуç хунă салтаксен ячĕпе лартнă хисеплĕ палăк, чĕррисемшĕн тесен, вăл хамăр кĕрешсе çирĕплетнĕ социализмла çĕршыва куç шăрçи пек упрама вĕрентет, уншăн таса кăмăлпа тăрса, кирлĕ чух кĕрешмелле пулсан, хастарлăн кĕрешме чĕнет. Çавăн пек илтĕнет поэмăн хăватлă кĕвви.

1968.